10-мĕш №. Октăбер 1935 ç.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КАПКĂН

Кунсерен çĕршыв чечекленет
Çĕнтерӳ йалавĕ айĕнче.
Савăнаť ĕçхалăх, çĕкленет
Çут тĕнченĕн ирĕк пайĕнче.

Йун ĕçен тискер фашиссене
Вăрçă тытамакĕ йатса çапрĕ.
Вăхăт çитĕ, çапĕ вĕсене
Пур тĕнченĕн Хĕрлĕ Октăберĕ.

Çăмăл чĕлхе.

Окт̆абĕр уйавĕ кунне ачампа Мускавра пултăмăр. Нимĕç рабочисен делегацине курсассăн ачам пĕр-пĕр нимĕç рабочипе калаçасшăн аптăратма тытăнчĕ.

— Нимĕçле епĕр иксĕмĕр те пĕлместпĕр. Вĕсем ăнланас çук епĕр чăвашла каланине,—тетĕп.

Ачам итлемест.

— Чăваш чĕлхи йăвăр мар. Тен ăнланаççĕ пулĕ,—тет.

— Ăçтан ăнланма пултарĕ-ха нимĕç çынни епĕр чăвашла каланине?

Ача, мана пăхмасăр, чупса кайса хыçалтарахра пыракан пĕр рабочийе паљто аркинчен тытса туртса:

— Ан кай-ха!—тесе чарчĕ.

Ик аллинчи пўрнисене пĕрлештерсе „10“ туса кăтартрĕ те, унтан 8 пўрнине ăрасна илсе ун умĕнче тытса тăчĕ.

— Пайан Окт̆абĕр 18 çул тултарчĕ Уйав пирĕн,—терĕ.

— А-а-а! Ахтцен!—терĕ хайхи рабочи демонстраци тăвакан рабочисен „Сывă пултăр 18 çул тултарнă Окт̆абĕр револ̆уци“ тесе ылттăн саспаллисемпе çырнă йалавĕ йенеле кăтартса.

— Çапла, çапла... пирĕн ĕлĕк патша пулнă, вырăсла калаçан „царь“ пулнă.

— Цар, цар!—терĕ нимĕç ачам каланине ăнланнă пек пулса.

— Ăна пирĕн аттесем хăй ĕлĕк нумай çул пĕр хускалмасăр ларса пурăннă вырăнтан урапа тапса ывăтса кăларнă,—терĕ ача патшана мĕнле тапса ывăтса кăларнине урипе туса кăтартса.

— О-хо!—терĕ нимĕç ку каланисене те ăнланса.

— Кайран пире меншевиксем пĕтерме тăрăшнă.

— О-о-о!.. Меншевик!—терĕ нимĕç тутисене йĕрĕннĕ пек туса.

— Бол̆шевиксем çийеле тухса социалисăм тума тытăнса кайнă.

— Бол̆шевик, бол̆шевик... социалисăм,—терĕ нимĕç Кремĕл çинеле, урампа йурласа иртсе пыракан демонстрантсем çинеле пўрнисемпе тĕллесе кăтартса.

— Ленин партийĕ Сталин çулпуç йертсе пынипе пĕтĕм тĕнчери халăха тĕлĕнтерекен çитĕнўсем туса хурса çакă питĕ пысăк уйава çитрĕ.

— О-о-о, Ленин... Сталин!—терĕ те нимĕç рабочийĕ хăйĕн йăрăм-йăрăм шурăлă хура кепкине хывса аллине тытрĕ. — Ленин... Сталин... Коминтерн...

— Тĕрĕс. Ленинпа Сталин тата Коминтерн... Каланисене пĕтĕмпех ăнланатăн иккен. Атте калат̆: есĕ чăвашла каланисене ăнланаймастăн, тет. Есĕ чăвашла ăнланнине пĕлмерĕ атте. Та-ак... Окт̆абĕр уйавне иртерме СССР-е килес терĕр?—терĕ ача „тата мĕн çинчен калаçас-ши“ тесе шухăшласа тăнă хыççăн.

— Окт̆абĕр... СССР... Москва...—терĕ хирĕç хайхи рабочи.

— Çапла. Москва... Мускава килнĕ... Ну, сывă пул, епĕ санпа калаçса илнĕшĕн питĕ хавас. Хамăрăн шкул ачисемпе колхозниксене санпа иксĕмĕр мĕнле калаçни çинчен пĕр сăмах хăвармасăрах каласа тĕлĕнтеретĕп.

Унтан нимĕç рабочин ĕçпе хытнă аллине хăйĕн пĕчĕкçĕ аллипе чăмăртаса: „Сыв пул“—терĕ.

— Ну, куртăн-и мĕнле епĕ нимĕç çыннипе калаçнине?—терĕ ман йеннеле çутă куçĕсемпе пăхса çавăрăнса тăрса.

— Куртăм!—терĕм те хамăн йуратнă ачама кĕске çўçлĕ пуçĕнчен хытă алăпа ачашласа илтĕм.—Кирек хăш чĕлхепе калаçакансем те ăнланма пултаракан сăмахсем тăрăхăн йут патшалăхри нимĕç рабочипе те чиперех калаçма пултартăн. Куншăн сана маттур теме йурат̆!—терĕм.

Ача хавассăн темиçе хутчен ман умра йăлт та йăлт сиккелесе илчĕ те, çанăран тытса урам тăрăх тата ытти патшалăхсенчен килнĕ рабочисене курма сĕтĕрме тытăнчĕ.

Ив. М.

Хура Йакку.

— Акă кунтала килет пĕр ўсĕр çын, картузĕ хăйĕн çĕтĕк. Ак ўкрĕ, ха-ха-ха! Тăчĕ, веç килет. Куратăн-и?

— Ну-ну, куртăм. Мĕн вара?

— Çавă ĕнтĕ пирĕнколхозри Хура Йакку пулат̆.

— Йепле? Сарă вĕт вăл.

— Чăннипе вăл сарă, анчах унăн хушамачĕ „Хура“, мĕншĕн тесен вăл колхоза ĕçлеме тухмаст̆, çаван пекех йăчĕ те хура хăма çинчен тухмаст̆. Çавăнпа колхозниксем ăна Хура Йакку тесе чĕнеççĕ.

Ç. Йаратай.

Пирӗн Совет сойузӗнче ҫапла ӗнтӗ.

—Кала-ха тархасшӑн—кама фабрикант тесе калаҫҫӗ?
— Пӗлместӗн-и? Фабрикант тесе хапрӑкӗсене рабочисемпе хресченсем туртса илсе патшалӑх аллине панӑ ҫынсене калаҫҫӗ.

Виҫӗ ӑру пӗр канашлӑн ӗҫлетпӗр
Ҫавӑнпа питӗ хӑвӑрт ҫитӗнетпӗр.
Шиклентермӗ пире нимӗнле ҫапӑҫу та,
Октӑберӗн ҫулӗ йаланах ҫап-ҫутӑ.

Усли Васлейӗ.

Анман çул.

И. Кашлинке.

— Гаҫă!—терĕ мана арăм пĕр ирхине,—часрах тăр, темĕскерле тумланнă çын килчĕ.

„Темĕскерле тумланнă“ тенине илтсенех вырăн çинчен сиксе тăрса аҫа çапнă пек урайнеле сикрĕм. Йĕплĕ хулăпа ăшалантарнă чухнехи пек васкаса тумланкаларăм та арăм патне тухрăм.

— Ăçта хай çын? Мĕншĕн кĕртместĕн?

— Чăр! пăхрĕ арăм ман çине. Унтан лач! сурчĕ те:

— Мĕн йал кулиле галстук вырăнне манăн пурçăн чăлхана çыхса лартрăн?—терĕ.

— Васканипе алăк тесе чӳречерен та сикĕн,—терĕм те, хĕр каласма кайакан каччă пек тумланса, пӳрт умне тухрăм. Мана курсанах авалхиле тумланнă, хитре йаштам каччă хуллен пусне тайса кукленчĕ те:—Ан çиленĕрех! Хресчен çуртне хваттере кĕрес килмен пирки ăнсăртран сирĕн пата кĕрсе пăхам терĕм. Паллашăр ĕнтĕ, епĕ—Павăл Иванч!

— Ах, тархасшăн ăнланмаларах калăр, кам терĕр?—ыйтрăм, тахçан илтнĕ йат пек туйăннăран.

— Чичикăв!—терĕ паçăрхинчен те йăвашшăнтарах.

Пӳлĕме кĕтĕмĕр. Сĕтел çинче сăмавар чашлаçса ларат̆. Тарелкăсенче темĕн тĕрлĕ кукăҫсем пĕремĕксем, çырласем...

Чей ĕçетпĕр. Авалхиле тумланнă çынна, хамăр палламастпăр пулин те, хăналантаратпăр.

Чей ĕçе-ĕçе чăлăм шыва ӳкнĕ май, хай пирĕн хăна савăнăçлăн кулкалама пуçларĕ. Васкаса пĕр ик çăвар сыпрĕ те:

— Есĕр пуйан пурнăçпа пурăнатăр пулмала. Миçе чун тытатăр?—терĕ.

Ку çын шутник иккен, тетĕп хам ăшăмра. Шутник çынпа шутлерех калаçас тесе:—Чун тени пĕрре те çук вара. А хамăр пурăнасса виççĕн пурăнатпăр: хам, арăм тата октябрйонăк—Ритă!—тетĕп.

— Пĕр чун та çук!? Ан тĕлĕнтер. Ара есĕр епĕ авал паллана Манилăвран та пуйантарах пурăнатăр?—тет хăна, тĕлĕннипе куçĕсене чарса пăрахсах.

Ку пирĕн бухгалтĕра паллат̆ пулмала-ха, апла пулсан тĕрĕссипех калам, тесе тавçăрса илтĕм те:—Ара, вăл йалан прогул тăват̆, терĕм.

Хăна нимĕн те чĕнмерĕ, пуçне çеç пăркаласа сĕтел хушшинчен тухрĕ.

Пайан канмали кун майĕпе, апат çинĕ хыççăн, хулари пахчана уçăлса çӳреме кайма шут тытрăмăр. Оҫă пĕчĕк Ритăна çĕклесе пырат̆ епĕр хăнапа иксĕмĕр пирус тĕтĕмĕсене сывлăшала вĕрсе кăларса утатпăр.

Виçĕ хутлă пысăк çурта курсанах ман хăна пат! чарăнчĕ. Çуртăн тăррине курма пуçне çĕклесенех пуçĕнчи шлепкийĕ çĕре çат!—персе те анчĕ.

— Ах, мĕнле çурт пулчĕ ку... Чӳречисем... Кам çурчĕ?

— Хресчен çурчĕ,—тесе ăнлантартăм йут çынна. Кăна каласан вăл пуçне кăна пăркаларĕ.

Акă хулаваррине çитрĕмĕр. Умра темиçе хутлă, пысăк та илемлĕ çуртсем. Пахча. Вĕçĕ-хĕрри çук автомобил йавăнат̆. Сывлăшра йероплансем мĕкĕреççĕ. Радиорепродуктăрĕ пĕтĕм плошчĕде йанратса музăк калат̆. Йĕри-тавра таса тумланнă халăх йавăнат̆.

— Ах, хула! Мĕнле хула пулчĕ ку? Епĕ Раççей тăрăх çӳренĕ чух ку хулана курман. Лешĕ, хăйсене хăйсем чупакансем мĕнсем. Кала, кала часрах?—васкаса ыйтма тытăнчĕ хай çын.

Хăнана лăплантарас тесе хватере таврăнтăмăр.

— Ку мĕнле çын пулчĕ ара: вăрă йышши-ши, йе ăсран тайăлнăскер-ши?—тет Оҫă шăппăн. Халиччен хула курман çынтан хам та тĕлĕнетĕп.

Кăнтăр тĕлĕнче хваттер умне каретă çитсе чарăнчĕ.

— Селифан!—терĕ хай манăн хăна,—халĕ епĕр йала кайатпăр, ăçтан каймалине ыйтса пĕл...

Кун пек бричкăсемпе авал кăна çӳренине аса илтĕм те, хăна ыйтнă тăрăхăн йала кайма килĕшрĕм.

Епĕр çула тухни пилĕк сехет çитнĕ çĕре пирĕн куç умне Тӳрйар колхозĕн лаша вити, сысна фермы, пысăк йĕтемĕ килсе тухрĕç.

— Çакăнта манăн Манилăвпа Собакевич патне çитмеле,—терĕ те бричкă çинчен сиксе анчĕ.

Манилăв тесе ыйтсанах пире колхоз бригадирĕ патне кăтартса йачĕç. Таса илемлĕ çурта кĕтĕмĕр. Шап-шурă кĕпе çинчен илемлĕ галстук çакнă çын хаçат вуласа ларат̆.

— Сывă пурăнатăн-и? Ну, мĕнле,—тет хăна,—есĕ хай кĕперпе башнĕна турăн и?

Колхозник йăл! кулса йачĕ те:—Ара çĕнĕ майлă çилос башни шухăшласа кăларнăшăн преми пачĕç. Питĕ мухтаççĕ. Халĕ тата йăвăç кĕпере урăх майлă тума май пуррине сăнаттăм-ха,—тет.

Чичикăв ыйтнă тăрăх çилос башнине кайса курма килĕшрĕмĕр.

Темĕн пысăкĕш башнĕна курнă хыççăн:—Ах, есĕ чунăм Манилăв, епĕ малтан килнĕ чух нимейурăхсăрла плансем шухăшласа кăна хунăччĕ, халĕ акă тĕлĕнмеле йапаласем туса лартма та ĕлкĕрнĕ. Пурăнасса та чылай пуйан пурăнатăн. Чунсене чылай илтĕн пуҫ? Мĕнле улшăннă есĕ? Ах...

— Чипер калаçăр,—тет колхозник,—колхозра кам чуна илет? Епĕр халĕ ирĕклĕ, пуйан кулҫтурлă пурнăçпа пурăнатпăр.

Ку сăмахсене илтсен пуçне кăна пăркаларĕ хăна. Васкаса тройкине çавăрттарчĕ те малала кайма хушрĕ.

Виçĕ тур лаша бричкăна çил пек вĕçтерсе пыраççĕ. Тикĕс шоççе хĕрринчи километр йуписем вĕлтлетсе кăна йулаççĕ. Бричкă сăпкари пек силлесе пынипе епĕ те, Чичикăв та, Селифан та сывăрса кайнă пулнă. Пĕр лаши хыттăн тулхăрсан шарт! вăранса карăм.

Тĕттĕм каç. Тӳпери çăлтăрсем пĕр-пĕринпе куç хĕсеççĕ.

— Мĕншĕн есĕ çултан пăрăнтăн, — çухăрат̆ Чичикăв.

— М, м, м!—мăрлат̆ çеç Селифанĕ.

Пурсăмăр та çул шыратпăр. Акă инçетре йытă сасси илтĕнме пуçларĕ. Сасă йенне кайатпăр. Чи малтан хура тĕтĕре витĕр пысăк ĕмĕлкесем курăнчĕç. Ĕмĕлкесем çывхарса пынă май çуртсем пулса тăчĕç.

— Çĕр хута кайар мар, хваттере кĕрсе выртар,— тетĕп епĕ.

— Тĕрĕс, кайар мар. Манăн кунта паллакан пуйан хĕрарăм Коробăчкă пур.

Ыйткаласа тупрăмăр. Анчах ку Коробăчкă мар,— колхозницă Коробкинă пулчĕ.

Кăмăлласа йышăннă хыççăн таса минтерсем çине выртса çывăртăмăр. Ирхине куçа уçсанах куç умне тĕрлĕ чечексем, картинсем, чÿречене карнă чĕнтĕрсем курăнса карĕç.

— Каçарăр,—тет колхозницă, —пайан чейпе кăна апатлантармала пулчĕ. Хам каçхи рабфакра вĕреннĕ пирки апат хатĕрлеймерĕм. Хăнасене столовăйне илсе кайма инçерех..

Манăн хăна унгала пăхат, кунтала пăхат те пуçне кăна пăркалат.

Çисе тăраннă хыççăн сывлăх сунтăмăр та çула тухрăмăр.

— Каймастăп урăх никам патне те. Ăнланмала мар сăмахсемпе калаçаççĕ. Çапла вĕсем кăшт пуйсанах „француз“ чĕлхипе пакăлтатаççĕ,—тарăхат хăна.

— Чипер калаçăр, тетĕп,—вĕсем хамăр чĕлхепех калаçаççĕ вĕт.

Пĕр-пĕринпе калаçма пăрахрăмăр. Епĕ çакă тĕлĕнмеле çын, халђхи пурнăçа ăнланманнинчен тĕлĕнсе пыратăп. Çапла шăппăн пынă хушăрах кăлт! тертрĕ Чичикăв.

— Айта кĕрсе тухар Плђушкин патне?

Килĕшрĕм.

Тепĕр çур сехетрен пирĕн умра колхозăн завхозĕ Плђушкин кулкаласа та тăрат.

— Епĕ,—тет,—колхоз пурлăхне хамăн пурлăхран та ытларах сыхлатăп. Акă çак складсенче пĕр пĕрчĕ тусан та тăратмастăп.

Пуçне çеç чикрĕ Чичикăв. Галстук çыхнă, савăнăçлă çын çине пăхрĕ те:—кайар епĕр, сывă пул есĕ!

Малала кайма ĕмĕт çукран, хулана таврăнма килĕшрĕмĕр.

Епĕр хулана каçхине 6 сехетре çитрĕмĕр.

Апатланкаланă хыççăн, Олђă сĕтел пуçтаркаларĕ те:

— Ганђă, кайар пулђ кĕçĕр кинона, Гогăлђăн „Вилĕ чунсем“ поемине кăтартаççĕ, терĕ.

Епĕ килĕшрĕм.

Халĕ ĕнтĕ пысăк залра ларатпăр. Екран çинче кивĕ Раççей. Кивĕ Раççейĕн кивĕ çыннисемпе кивĕ пурнăçĕ. Акă куç умне Плђушкин мужикĕсем, вĕсен çĕрсе тайалнă пÿрчĕсем килсе тухрĕç...

Чичикăв пăхса ларчĕ-ларчĕ те, такам çĕклесе çапнă пек екран çине хăпарса çухăрма тытăнчĕ:

— Çук! Çук халĕ вĕсем, пĕри те çук. Кулăр, ахăлтатсах кулăр ман вăхăтри тĕнчерен... Кам çĕрçăташшĕ хушрĕ,—терĕ чыхăннă хыççăн,—мана тепĕр хут Раççей тăрăх çапкаланса çÿреме? Епĕ курнă çĕршыв—Раççей мар, темĕскерле епĕ курман, пачах урăх çĕршыв. Кунта епĕ халиччен курман çынсем, машинсем, пуйан пурнăçпа пурăнакан халăх.

Унтан каллех чыхăнчĕ те:—Йепле улшăннă вăл, ăçта кивĕ тĕс. Мĕн ухмахланса иккĕмĕш хут тухрăм епĕ. Çĕрçăттăр мана!.. терĕ.

— Ганђа, хай ку Гогăлђ çырса кăтартнă Чичикăв пулчĕске,—терĕ те, ахăлтатса кулса йачĕ Олђă. Тÿсеймерĕм, тĕттĕм пурнăç çине халђхи куçпа пăхса тĕлленнĕскер, пĕтĕм халăхпа перле епĕ те ахăлтатса йатăм.

Частушкăсем.

Мĕне кирлĕ мана питĕ
Хаклă пирус „Пушкă“?
Йантăратăр, кĕвĕлетĕп
Тĕрлĕрен частушкă.
  Ĕлĕк манăн пÿрт-çуртра
  Шăрш-маршă çуратчĕ;
  Çулталăксăр урайне
  Карчăк ман çумастчĕ.
Халĕ пÿрт-çурт чаплă ман,
Урайĕсем сăрлă.
Йурра кумат патефон...
Пурнăç ман кулђтурлă.
  Ĕлĕк пупсем халăха
  Ураса тыттарнă;
  Хăйсем вара кăлăхах
  Çисе кÿпсе ларнă.
Ĕненместпĕр халђ пупа,
Ултава пĕлетпĕр.
Кăмăлларăм клуба
Радио итлетпĕр.
  Ĕлĕк епĕр çемйипех
  Кĕçĕпе аптранă;
  Кунĕн-çĕрĕн шăл йĕрсе
  Текех хыçкаланнă.
Халĕ шăм-шак тап-таса,
Пурăнма пĕлетпĕр:
Пĕрик шĕпĕн тухсанах
Тухтăра кайатпăр.
  Ĕлĕк тырпул вырнă чух
  Çурла пит асатчĕ;
  Хăмăл касас вырăнне
  Вăл алла касатчĕ.
Пĕрлешÿлĕ пурнăçпа
Ман çĕкленчĕ кăмăл;
Тыр выратпăр жнейкăпа
Ех, ĕçлеме çăмăл!
  Çулйĕрсемччĕ—пĕтмеле...
  Тухсан аран шуçнă;
  Пăрăс мăнĕш тĕнеле
  Шарт!—тутарса хуçнă.
Халĕ çулсем çатма пек
Йап-йака, тип-тикĕс;
Ларса пыран „улпутла“
Вĕçтерет автобус.
  Ĕлĕк пирĕн кĕперсем
  Тайалса ларатчĕç;
  Шăши каçнипех, мурсем,
  Йăванса анатчĕç.
Халђ кĕперсем пăх та кур
Савăнса тăратпăр;
Автона та, трактăра
Урлă каçаратпăр.

Марк Аттай.

Тайуххапа Пайухха

Иван Мучи.

— Ытти халăха телей валеççе панă чухне, чăваш урине сырса йулнă, тет.

— Ну?!

— „Ну“ мар, чăн. Ури пирки телейсĕр йулнă чăваша йурататпăр пулсан, пирĕн иксĕмĕрĕн авалхи чăвашсем каласа хăварнисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе пымала,—терĕ калаçса ларакансенчен сарă кĕреçе сухалли.

— Мĕнле?—терĕ куç харшисене хăпартса, ик аллине сарса йарса хура качака сухалли.

— Ваттисем мĕнле каланă, çавăн пек пурăнар. Сăмахран, ваттисем каланă: кулачă çийес тесессĕн, кăмака çинче выртмаççĕ, тенĕ. Епĕр те кăмака çинче выртмăпăр. Акă татах сăмахран, савăн та, манăн та хырăмсем выçнă. Ваттисем каланă: хырăм хыççăн çăкăр çӳремест, тенĕ. Çавăнпа санăн лавкана çăкăр илме кайас пулаť. Çула май пасара кĕрсе, пĕр кĕренке çу сутăн илсе кил. Таврăнсан апат пĕçерĕпĕр. Кирлĕ ытти çимĕççене ес пасартан таврăначчен хамах хатĕрлĕп. Килĕшетĕн-и, пĕтĕм чĕререн савнă, паха Пайухха тусăм?

— Килĕшетĕп, пĕтĕм чунтан савнă, хаклăран та хаклă Тайухха тусăм!—терĕ те хура качака сухалли, кăсйинчи укçисене хыпашласа пăхнă хыççăн пасара чупрĕ.

Вăхăт каçала сулăннă май, икĕ хĕрарăм анчах пасарта çу сутаççĕ. Пĕрремĕшĕн шăратнă çăвĕ çине пăхсан, ăшчик йĕкленмеле—таса мар, теприн—таса, сап-сарă, вăлча пек пăчăрланса тăраť.

Тĕссĕр çу сутакан хĕрарăмран ыйтрĕ:

— Çу мĕн хак?

Хĕрарăмĕ сулахай аллипе шывланнă сăмса айне шăлса илнĕ май:

— Вуник тенкĕ,—терĕ.

— Сан мĕн хак?—ыйтрĕ иккĕмĕшĕнчен.

Хĕрарăм хура тĕрĕлĕ шурă тутрине пушă аллипе йусакаласа илнĕ хыççăн:

— Вун тенкĕ,—терĕ.

— Сан йӳнĕ. Епĕ хаклине илетĕп. Çук çын укçине йӳн тавар пĕтерет, тенĕ авал ваттисем.

Хаклă, анчах тĕссĕр çăва илсе, çула май лавкана кĕрсе тухса, тусĕ патне таврăнчĕ. Çаннипе мăн шăмăсемлĕ пичĕ çинчи тарне шăлкаласа илчĕ те, çăкăрпа çуне Тайухха умне пырса лартрĕ. Унтан кăсйинчен пирусне кăларса çăварне хыпрĕ те, Тайуххаран ыйтрĕ:

— Ну, ытти çимĕçсем хатĕр-и?

— Хатĕр. Çĕтĕк çăпата йашки пĕçерсе пăхăпăр. Пайухха йупа пек хытса кайса пĕр самантлăха нимĕнле сăмах та калама пултараймарĕ.

— Çупа çĕрĕк çăпата та тутлă, тенĕ ваттисем. Вĕсем каланине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çакă икĕ мăшăр çĕрĕк çăпатана хуранта вĕретсе йашка туса çийĕпĕр.

Пайуххан куçĕсем савăнăçлăн йăлтăртатса, тутисем телейлĕн сарăлса карĕç.

Хурана икĕ мăшăр сӳсленсе кайнă çĕрĕк çăпата кĕрсе выртрĕ.

Хырăмĕ хыр тăрнех хăпарса кайнине сиссен, Пайуххи, тутисене тутлăн çуласа илсе, тусне каларĕ:

— Пирĕн çăпата апачĕ пиçрĕ пулĕ?—терĕ.

— Хирте апат тутлă, теççĕ. Айта унта кайса çийер,—терĕ тусĕ, хавасланнипе хĕрелсех кайнăскер.

— Айта!

Çĕрĕк çăпата йашкине хуранĕпех йăтса хула тулашĕнчи тахçанах вырса кайнипе шăппăн выртакан пушанса йулнă уйа тухаççĕ. Çул çинче Тайуххи калаť:

— Итле-ха, Пайухха,—тет.—Çул çинче кайала çаврăнса пăхсан тепĕр ăс кĕрет, тенĕ ваттисем. Тавай кайала çаврăнса пăхар.

— Тавай!

Çаврăнса пăхсан хыçалта пĕр пĕлĕт курмиччен ĕçсе тултарнă çĕтĕкрех етем йурласа пынине курчĕç.

— Ку çын чăваш мар, вырăс,—терĕ Пайухха аллине куçĕ çийĕн тытса.

— Вырăс? Вырăс йурласан тăман йе çăмăр тухаť, тенĕ ваттисем. Айта хăвартрах хире çитсе çисе тăранар.

Кăштах кайсан Пайухха Тайухха çине тилмĕрсе пăхса каларĕ:

— Тӳрĕ кайакан тислĕк хыпнă, кукăр кайакан çу хыпнă, тенĕ ваттисем. Айта кукăр кайар.

Вӗсем малтан уй варринче курӑнакан лапсӑркка йӑвӑҫ патне ҫитсе ларма шухӑш тытнӑччӗ. Халӗ ҫулран пӑрӑнса сухаланӑ анасем тӑрӑхӑн кайма тытӑнчӗҫ.

Лӑпкӑ ҫил вӗсен ҫӳҫӗсемпе сухалӗсем ҫинче выљаť, малти уй йенчен кӗрхи ҫӗрӗн нӳрӗк шӑршшине илсе килет. Вӗсен умне симӗсӗн кӑвакӑн курӑнса, йӑвашшӑн выртакан кӳлӗ тухса выртрӗ. Кӳлӗ ҫывӑхнех ҫитсе тӑрсан, Тайухха:

— Айта пулӑ тытатпӑр,—терӗ.

— Мӗнпе тытатпӑр?

— Чӑваш ваттисем: пулӑ ҫийес тесессӗн, шыва кӗрес пулаť, тенӗ. Шыва кӗрсен пулли хӑйех сан патна ишсе пырса аллуна кӗрӗ. Вара ҫӗрӗк ҫӑпата йашки хыҫҫӑн ҫиме пулӑ та пулаť. Ҫупа шариклетпӗр.

— Есӗ каланипе кӑмӑлӑнах килӗшетӗп Анчах авалхи чӑваш ваттисен йӑлипе малтан чӑваш туррисене асӑнса перекет кӗлли тӑвас пулаť.

Шлепкисене хул айне хӗстерчӗҫ. Тайуххи хӑйӗн тетрачӗ ҫине ҫырса илнӗ авалхи кӗлӗ сӑмахӗсене калама тытӑнчӗ:

„Ҫырлах, турӑ Ҫытӑр,
Хосподи Хӗветӗр,
Тухӑҫне туртса кӑлар,
Перекетне персе кӑлар.
Ир выртса ирмешме,
Каҫ выртса кармашма
Ҫӑкӑр тӑвар лӑк пултӑр.
Варапи[1]) вӗтӗлги
Вӑл виҫҫӗ сӑхса илеччен
Пирӗн пурана кӗрсе ӳктӗр!
Касак варӗнчи Тӑхтаман,
Выљӑх-чӗрлӗхе сыв усра,
Ҫыр куҫнӑ вар тӑринчи Утаман
Чир-чӗртен тытса тӑр!
Хушка турри Хушамкай
Ула выљӑха хунаттар,
Ларкури киремет
Укҫа-тенке пуҫтар!
Ҫил турри Ҫилвестр,
Ҫӑмӑр турри Иљук,
Пӑр-йур турри Пӑрахӑљ,
Ҫара ҫамка Шушки,
Ҫара пуҫчипе ҫапсан вут тухаť,
Вут кӑвартан сыхла!
Ҫырлах, турӑ Ҫытӑр,
Хосподи Хӗветӗр,
Тухӑҫне туртса кӑлар,
Перекетне персе кӑлар!“

Ухатник пӑшалне ҫакнӑ ҫын иртсе пыраť. Кусем темӗскер хӑтланнинне пит тӗлӗнсе пӑхса тӑчӗ те, патнерех утса пырса:

— Мӗн хӑтланатӑр кунта?—терӗ.

— Пулӑ тытас тетпӗр,—терӗ Тайуххи именнӗ пек пулса.

— Пулӑ ҫав шапа кӳлливче пулаť-и?—ҫын лахлах-лах кулса йарса уй шӑплӑхне хускатса йачӗ.

— Кулакана питне ҫыпӑҫаť,—тенӗ ваттисем,—терӗ Пайуххи ҫын ҫине пӑхмасӑр шӑл айӗн.

— Тиркекене тирӗк тӗп тивнӗ,—терӗ Тайуххи.

— Ҫынна сивӗ сӑмах калаччен пӗр чӗл ҫӑкӑр ҫӗкле!—хушса хучӗ Пайуххи сассине хӑпартса.

— Ҫынна сӑн-сӑпатне ан пӑх, ӑсне-хакӑлне пӑх,—терӗ Тайуххи ним пӗлмесӗр тӑракан ҫынна пӳрнипе йунаса.

Ҫын темӗскерле шикленӳлӗ ҫутӑ ҫапнӑ куҫӗсемпе икӗ тусӑн сиввӗн, анчах айван ачала пӑхакан куҫӗсене хыпашларӗ те, нимӗн шарламасӑрах хӑйӗн ҫулӗпе анасем ҫийӗн малала уттарчӗ.

Шӑп пулчӗҫ. Пайухха, пуҫне хулпуҫҫи ҫине тайӑнтарса, теме итленӗ йевӗрӗн ларать. Тайухха пӳрнисемпе пӗрмай хӑйӗн чӗркуҫҫи ҫийӗн шаккаса лараť. Ларсан-ларсан:

— Ҫантаӑк кӗр йенеле сулӑннӑ пулин те, кунта чечексем нумай иккен. Ваттисем: ӑҫта чечек, унта пыл пур, тенӗ. Ҫиме ҫакӑнта ларсан, апат та тутлӑ пулассӑн туйӑнаť.—терӗ Пайухха

Тайухха, тусӗ каланипе килӗшсе, кивӗ, сарӑ портфӗлӗнчен икӗ йӑвӑҫ кашӑк кӑларса пӗрне Пайуххана тыттарчӗ.

Пайуххан пичӗ кӗтмен ҫӗртен сасартӑк ҫилӗлӗн турткаланса илчӗ.

— Мана кашӑкне пӗчӗкреххине патӑн!—терӗ вӑл тути хӗррисене сивӗн чалӑштарса.

Тайуххан кӑвак путӑк куҫӗсем Пайухха ҫине шӑтарасла пӑхса тӑчӗҫ.

— Ҫын аллинчи кашӑк пысӑккӑн туйӑнаť, хӑй аллинчи пӗчӗккӗн курӑнаť,—терӗ вӑл ҫилӗлӗн ура ҫине тӑрса.

— Ан тавлашса тӑр! Ак пӗрре алтуйипе пуҫунтан шаккаса илсен!

— Ывӑтма пӗлмен алтуйи пуҫа килсе вӑрӑнаť!..

Шӑмӑ тупнӑ йӑтӑсем йевӗр хэркашса карӗҫ пирӗн икӗ тус.

Пайухха пуҫне сасартӑк: „ҫынна ырӑ тӑвачченҫыран хӗрне астарса пыр та, ҫыран хӗрне ҫитсессӗн тӗрт те йар“ тенӗ ваттисен сӑмахӗ кӗрсе кайса пуҫ мимине хускатса йашӑлтатса илет. Ҫав шухӑш хушнипе вӑл Тайухха тусне йарса тытса кӳлле чӑмтараť. Унтан „ҫынна шыва путнине курсан, ӑна шалала шалчапах тӗртсе йар“ тенӗ ваттисен сӑмахне пурнӑҫа кӗртес тесе, хӑйӗн чи ҫывӑх тусне тарӑн кӳлӗ варринеле шалчапах тӗртсе йараť.

Ишме пӗлмен Тайухха вӑйсӑр аллисемпе темиҫе хутчен хӑлаҫлана-хӑлаҫлана илнӗ хыҫҫӑн Пайухха куҫӗнчен, кӳлӗн тӗпнеле кайса, ӗмӗрлӗхех ҫухалчӗ.

Ыглашши инҫетрех мар, лапсӑрка йӑвӑҫ хыҫӗнче паҫӑрхи ухатник утни курӑнса карӗ.

Пайухха куҫӗсем йӗри таврала шикленӳлӗн пӑхса илеҫҫӗ. Пуҫӗнче: „паттӑрӑн пуҫӗ ҫухалнӑ, тараканӑн йӗрӗ ҫухалнӑ“ тенӗ ваттисен сӑмахӗнчен пулнӑ шухӑш выљанса хӑй пуррине палӑртрӗ. Ҫав шухӑш аптӑратнипе Пайухха, пиҫнӗ ҫӗрӗк ҫӑпата йашкине ҫимесӗрех, шӑнсуха тунӑ анасем урлӑ хӑлат пек хӑлаҫланса, вӑй ҫитнӗ таранах тарма тытӑнчӗ. Нимӗн пӗлмен ухатник вӑл тарнине курсан, чылайччен пӑхса тӑчӗ. Кӑшт тӑрсан Пайуххан шл пки ҫеҫ курӑнма пуҫларӗ айлӑмран, ухутник малала утгарчӗ.

Йуптарулӑ каланисене ӑнланайман Тайуххапа Пайуххасене, вӗсемпе пӗрле чӑваш пурнӑҫӗпе ӑстӑнне ӑнланса илеймен националиссене пехилесе паратӑп ҫакӑ йӗплӗ йумахӑн сӑмахӗсемпе йӗплисене.

---

[1]) Сала кайӑк, ҫерҫи

„Капкăна" килнĕ жалăбăсем

Капкăн тус!

1935 çулта, çенťаберĕн 3-мĕшĕнче, манăн тĕлĕнмеле усал сăмахсем илтмеле пулчĕ, çавăн çинчен сире çырса пĕлтерес терĕм. Тĕрĕссипе каласан, ун пек ирсĕр ĕç пĕрре çеç пулман. Çĕмĕрле комбиначĕн урапа цехĕнче тепĕр çĕнĕ цех ĕçлет, ăна пирĕн ширпотреб цехĕ теççĕ. Ăна организацилени нумайах пулмасť-ха, унта килçуртра кирлĕ тĕрлĕ йапаласем тăваççĕ. Йураť. Цех начаљникĕнче Орлов йулташ ĕçлет. Ку та йурамала, анчах çак Орловăн чĕлхи питĕ вăрăм, пире, рабочисене, час-часах намăс сăмах каласа вăрçаť. Хуг тем çырсан та тўсет теççĕ те, анчах вăл калакан сăмахсене çырсан... тўсейес çук, çавăнпа çырмастăп. Тепĕр йенчен тата—вăтанатăп. „Капкăна" куљтурлă çынсем вуланине епĕ лайăх пĕлетĕп, çавăнпа вăл ирсĕр сăмахсене çырас тесенех манăн алă чĕтреме пуçлаť.

Малта асăннă чыслара цех тăрăх иртсе пынă чухне, завкомăн вăхăтлăх председателĕ Быкăв йулташ, çав Орлов шкап çумне пăтасем çапса тăнине кураť те, ун патне пырса ыйтаť:

—Ма шкапа пăта çапса брака кăларатăн?—ыйтаť унтан Быкăв йулташ. Орлов ăна намăс сăмахпа кăшкăрса пăрахаť.

Быкăв йулташ çав тери тĕлĕннипе малтан ним калама аптăраť, унтан çапла ыйтупараť ăна:

—Хушаматăр мĕнле сирĕн?

Орлов ун çине шурă куçĕсемпе çилленсе пăхаť те, тата намăс сăмахпа кăшкăрса пăрахаť. Пире рабочисене, çак йапала питĕ тĕлĕнтерчĕ.

Актă çырнă хыççăн, ăна уншăн йатламала тунă та, анчах çапах та вăл хăнăхăва пăрахаймасран хăратпăр. Çырса пĕлтерĕрсем тархасшăн, сирĕн унта çынла, лайăх калаçма вĕрентекен курссем çук-и? Уншăн питĕ усăлă пулĕччĕ, çын пек йĕркелĕ калаçма вĕренĕччĕ, атту вăл цехра йыгă пек вĕрет, çав тери намăсланатпăр ун пирки.

Рабочий.

Хисеплĕ Капкăн!

Пирĕн Мăн Шетмĕри (Трак р.) йалпора 3-4 уйăх ĕнтĕ тăвар çук. Йалти колхозниксем пĕр-пĕр çын тăвар йарса йашка пĕçерчине сиссен, ун патне йалĕпех кашăксем, стакансем йатса тăвар илме кивçене чупаççĕ. Йалпо лавкине пулă тийесе килсен, пулă каткине тăвар вырăнне çуршар кило йашка çине йарса çиме васкамала-ши пирĕн? Çак ĕçлеме ўркенекен правленинче ĕçлекен Љубимăв, Антонăв, Игнатйĕв йулташсене тăварласа йарсан тăвар кўрсе килекен пулĕç ши?

Шетмĕсем.

Паха Капкăн!

Кăçал Кив Вĕренерти (Вăрмар р.) „Молăтăв" колхозра ыраша пĕçертсе пыллантарса йачĕç. Халĕ пирĕн кашни колхозникĕннех 20-шер, 15-шер пăт лайăх пыллантарнă салатлăх ыраш пур. Кама салат кирлĕ, калăр. Сутма пултаратпăр. Салатпа пĕрле колхоз председателĕ пулса ĕçлекен Иванов йулташа та „сутса йарса" пĕр-пĕр çĕре ăсатма шухăшăмăрсем пур.

Кирлисем пырса илччĕр. Хакĕ пирки тавлашса тăмăпăр.

Шăйрăк.

Капкăн учителĕм!

Кинопередвижкă кашни килмессĕренех епĕ ларакан партăра тăватă шăтăк туса хăвараť. Халĕ ун çинче 57 шăтăк. Кашни икĕ ернерен килсех тăрсан, вĕренў çулĕ пĕтнĕ çĕре епĕ ларнă партă пичĕ тетраť хурса çырма йурăхсăрланасси курăнсах тăраť. Динамăна çирĕплетме урăх май тупма конкурс туса иртерме май килмĕ-ши.

Апраз.

Тойçи, Вăрмар районĕ.

Капкăн тус!

Тупнерти (Çĕрпў р.) кĕçĕн вăтам шкулта чернил çук. Вĕренекенсем кашни кун чернила килтен шкула, шкултан киле çĕклеççĕ. Сирĕн „Капкăн" редакцинче ытлаши чернил пулсан, пирĕн Тупнер шкулне посылкăпа йарса пама пултараймăр-ши? Мĕнле вĕренес пирĕн чернилсĕр? Чернилсĕр вĕренме епĕр, хамăрăн шкул пуçлăхĕ пек, вĕренў ĕçĕшĕн нимĕн те тăрăшман çынсем мар.

Ваç. Ив-в.

Капкăн пичче!.

Мĕнле-ши, есĕ пĕлместĕн-и, Çĕрпўри педтехникум общчежитине камсем тунă? Вăл общчежитин çўлти хутри коридортан маччанала пăхсан, пĕлĕтсем васкаса иртсе кайни курăнаť. Пире, общчежитире пурăнакансене, пĕлĕтсем мĕнле йухнине асăрхаса тăтăшах сăнаса пыма хăнăхтарса çитересшĕн çапла тунă пулмала та, анчах епĕр апла тунипе килĕшесшĕн мар,—пĕлĕтсене епĕр тула тухсан курасшăн, хамăрăн общчежити маччи витĕр пăхса мар.

В. Иваншков.

Кап хыпакан Капкăн!

Шупашкарти профдвижени шкулĕнче вĕренекенсен общчежитинче урай шăлакан шчуткă çук. Урайне шчуткăсăр мĕнле шăлас пирĕн? Хамăр тăхăнса çўрекен тумтире шчуткă вырăнне хурса, пўлĕмри тусана тустарса тухма çук вĕт. Долгов завхоза шчуткă илме хушни икĕ уйăх. Шчутки Мускавран килет, тет. Епĕр вĕренсе пĕтернĕ çĕре çитмеле, теççĕ.

Ф. Ф. Тукас.

Шкул çинчен шухăшламан йалсовет председателĕпе çекретарĕ.

— Мĕнле пирĕн шкул темскерле тӳртĕн пăхса ларнă пек курăнать?

— Ара ăна ремонт тăвасси çинчен шухăшламастăн та, çавăн пирки сан çине тӳртĕн пăхать пуль.

Атă-пушмак йусакан.

Иван Мучи.

Пирĕн сотрудник „Капкăна“ çакланнисен ботинкисене пухса таварăннă. Аттисем те, ботинкисем те пурте Капкăна хĕсĕнсе аманнăскерсем пĕтĕмпех çĕтĕлсе йурăхсăра тухса пĕтнĕ. Вĕсене хамăрăн атăçа йусама хушрăмăр.

Пирĕн атăçă халĕ хăйĕн пӳлĕмĕнче тĕрлĕ фасонлă атăсемпе пушмаксемпе калаçса ларать.

—Ну, мĕн каласа парăр-ха мана?—тет хăй тавра купаланса выртакан пушмаксене.

Атă-пушмаксем пĕр сăмах та хирĕç чĕнмерĕç. Атă çĕлекен çиленнĕ пек пулчĕ.

— Есĕр чул чĕреллĕ. Хăвăра йусакан маçтăрпала та пĕр-ик сăмах калаçса илесшĕн мар Хăвăра мăнна хуратăр. Çапах есĕр мĕнлине пĕтĕмпех пĕлетĕп епĕ. Ей!—терĕ аллине вакс курман атă йенеле тăсса.—Хучаш (Йетĕрне районĕ) йалсовет председателĕн атти! Кам патне çӳресе тĕпне йакатрăн? А-а, чĕнместĕн. Калас теместĕн. Ан кала, хамах пĕлетĕп: çав кивĕ атă патне йуртса тĕпне йакатнă есĕ. Вăл усал кивĕ атăн хуçине те паллатăп —Иакимкин йалĕнчи кулак Сентĕр Павăлĕ пулать вăл. Сан хуçу сана тăхăнса çав кивĕ атă патне ĕçме-çиме çӳрекеленĕ пирки йалсовета пĕтĕмпех прорыва кĕртсе лартнă...

Урай çинеле лач сурса йачĕ те, кĕлли хыйпăнса тухнă сарă ботинкăна тапăнса илчĕ:

— Ну, йака тĕп! Сана ман сăмах çакă: шлепкеес, ботинкă мар. Санăн хуçу Пашалукасси (Тугаркас районĕ) йалсовет председателĕ хĕлле ваљљи выљăх апачĕ хатĕрлесси çинчен манса кайнă. Епĕ Орлов, Ăмăрткайăкăв тесе йал тăрăх çуначĕсене сарса вĕçсе çӳрет, йединоличниксене пĕр тоннă та çилос хывтарман..

— Манăн сăмах сана ваљљи те тупăнать,—терĕ „джимми“ фасонпа çĕленĕ ботинкăна йунаса. — Есĕр лаклă „лодăчкăпа“ иксĕр пĕрле Тивĕш (Ишлей районĕ) прикашчикĕ патĕнче хăнара мĕнле аташнине пит аван пĕлсе тăратăп. Сире тăхăнса çӳрекен çынсем, пĕр литăра 3 минут хушшинче ĕçмелле тавлашнă хыççăн: „Тивĕшле, тивĕшле хохак!“ тесе сикнĕ хушăра сирĕн резинкăран тунă кĕллĕрсене хыйпăтса пăрахнă. Вăл вăхăтра лапка хупă тăнă. Лапка умĕнче лапкана çăмарта пама пынă темиçе çын, прикашчик тухасса кĕтсе ывăннă хыççăн, çăмарта памасăрах килĕсене таварăннă.

Кĕтесре шăши кăштăртатса илни илтĕнчĕ. Атăçă, кăштăртатаканни шăши пулнине сисмесĕр, йап йака, йалкăшса çутăлакан арçын атти йенеле çаварăнса ларса:

— Мĕн пăшăлтататăн?—терĕ.—Ухмах есĕ! Çана та пит аван пĕлетĕп. Авă унта кĕтесре выртакан пĕр мăшăр хĕрарăм туфлипе йавăçатăн. Ырра мар. Хăвăнтан айакра мар выртакан ача сандали çине пăхса ил-ха, мĕнле вăл пĕтĕмпех çĕтĕлсе, пăхма та хăрушă пулса кайнă. Есĕр хуçупа иксĕр йут туфлисем хыççăн йуртса, пĕчĕк ачана çĕнĕ сандали илсе памали çинчен маннă. Ӳфу!—терĕ сăран атта урипе тапса йарса.

— Ех, шăпăрлан!—терĕ чӳрече айĕнче выртакан пылчăкланса пĕтнĕ хăрах атта:—Сана ревизи тумашкăн кайма хушнă, есĕ утма ӳркенсе килтех ларса вăхăта иртерсе пыратăн. 1700 тенкĕ растратă. Ревизи коммиççире сан йышши кахалсем ларнăран Йетĕрне районĕнчи Хучаш кооперативĕн правленинче 1933-мĕш çултанпа пурĕ 5 çын растратă туса йусанмали çурта кайса ларнă. Курăнак: есĕ малала та хаљхи пекех нимĕн те ĕçлес темесен, „джимми“ ботинкă пĕтĕм лапкана мăрйе витĕр кăларса йарĕ.

Кĕтесре çĕтĕк тĕплĕ пушмаксемпе атăсем пит нумайăн выртнине асăрхасан, атă йусакан ура çине тăрсах вĕсене вăрçма тытăнчĕ:

— Тĕнче куллисем! Лаша кӳлсе каймала пулсан, лаша таврашсем шыраса çӳренипех сирĕн сăран тĕпсем çĕтĕлсе пĕтнĕ. Хăмăт пĕр колхозник килĕнче, йĕнерчĕкĕ теприн килĕнче, пĕккипе тилхеписем виççĕмĕш килĕнче, урапи — тăваттăмĕшĕн килĕнче. Сирĕн хуçусем ун пек йĕркепе пурăнсан атă-пушмак тĕпĕсене кăна мар, хăвăрăн Алказĕн (Вăрнар районĕ) колхозăн тĕп пурлăхне те килĕрен киле салатса тĕп туса хурĕç!—тесе мăн хурама тункатинчен тунă пукан çине пырса ларчĕ те, аллине атă пăри тытса ĕçлеме тытăнчĕ.

Пирĕн лаши хура тур.

(*Ташă кĕввипе*[1] *йурламала*)

1. Пирĕн лаши хура тур,
Йуртни-чупни сисĕнмест;
Комсомолĕс савни пур,
Çын сăмахпе сивĕнмест.

2. Ма йуртас мар, чупас мар
Пирĕн колхоз лашисен—
Утă-сĕлĕ туми мар
Пирĕн колхоз ачисем.

3. Атăл хĕрне ансассăн та
Пул тытатпăр пулмала,
Вăйăç умне тăрсассăн та
Пултаратпăр пулмала!

4. Виç кĕтеслĕ йĕс такан
Кăвак лаша уринче;
Хĕрлĕ йалав ордĕнĕ
Пирĕн бригадир кăкринче.

5. Йăлтăрт! турĕ, йăл! сикрĕ—
Ирхи сывлăм пĕрчи мĕн,
Ташша чĕнтĕм—пуç чикрĕ,
Бригадирăм пĕлмест мĕн.

6. Пĕрле, пĕрле, пĕрле, тен те,
Ташша пирĕнпе пĕрле тăр,
Хĕрпе пĕрле ташлас, тен те,
Ташшине те пĕлсе тăр.

7. Сакăр ача, сакăр хĕр
Таш ташлаççĕ пит маттур.
Сакăрвуннăн, ав итлĕр,
Ал çупаççĕ пит маттур!

Н. Ваçанкка.

[1]) Кĕввине „Çĕнĕ Сăрнай“ сборникре тупма пулать.

Йусаймасан кун пек пуласси курансах тарат.

Шупашкар урамĕсене йусас тĕлĕшпе чылай çитĕнÿсем турăмăр пулин те, тĕлĕн-тĕлĕн (Грйазĕвкă стрелки, Симĕс пасар, хула тулашĕсем) пылчăк вăхăтĕнче тухса çÿреме хăрушăланса кайаççĕ,

Макарăв ÿкернĕ.



Колхозник: — Епĕ есĕр ГТО нормине „сдават" тăватăр тесе.
Хуласовет членĕ: – ГТО нормине панă-ха. Мĕнле те пулсан хăпарса пулĕ-ши?

Тискер тайга.

Сергей Йалавин.

Ҫавӑ пулас ӗнтӗ вӑл—куҫа курӑнса килмест тенӗ йапала. Курма нийепле те май ҫукчӗ, вӑл чӑнахах тӗрӗс; куҫа пӳрнепе тӗртсен те курӑнмасҭ — тӗттӗм. Хӗвелӗ таҫта тарса пытаннӑ, пӗлӗте хура шӑналӑк карса илнӗ. Шӑналӑкӗ калама ҫук кивӗ пулмала, шӑтӑкӗсенчен пӗрмай шыв йухса тӑраҭ. Ҫавӑнпа пулас, пойӑс ҫинчен пирӗнпе пӗрле аннӑ хӗрарӑм, чӗпӗ тытнӑ йытӑ пек пулчӗ; кӑтрисем „Йакалчӗҫ", кӗпе аркисем лапчӑнчӗҫ, тӗсӗ те темӗнле кичемӗн курӑнма пуҫларӗ. Тутине сӗрнӗ хӗрлӗ сӑрӑ йанаххи ҫине йӗр туса аннӑ, куҫ харшине сӗрнӗ хура сӑрӑ—пит ҫӑмарти ҫине ыйту палли лартнӑ. Анчах вӑл мӗн тӗслӗ пулнине урамра курман, курма май та пулман, питӗ тӗттӗм терӗмӗр-иҫ. Автовакзала тупсан, унта ҫитсе кӗрсессӗн ҫеҫ пирӗнпе пӗрле инкек курнӑ хӗрарӑмӑн „метаморфозине" куртӑмӑр, анчах сире, вулакансем, ку историйе йӗркипе каласа пама тивет, унсӑрӑн, сисетӗп хамах, сире ӑнланма хӗнтерех пулӗ.

Ку инкек автовакзал пирки пулчӗ, Канашри автовакзал пирки. Тӗпрен шухӑшласан, автовакзалта ӗҫлекен бӳрократсем пирки пулчӗ. Ӑна тӳррипех калас пулаҭ. Хаҫхи вӑхӑтра питех вӑтанса тӑма хушмаҫҫӗ, тӳррипе, тӗрӗссипе калас пулаҭ сӑмаха. Ку тӗлӗшпе пирӗн „Капкӑн" журнал питӗ тӑрӑшаҭ. Тӳррипе калас пулаҭ, мӗншӗн тесен бӳрократсем, мӗнле калас, чейеленчӗҫ темеле, вырӑнне, йатне каламасан (хӑш чухне йатне каласан та) „епӗ мар вӑл, ман ҫинчен ҫырман" теҫҫӗ. Вӑл имӗш нихҫан та бӳрократ пулма шухӑшламан та. Хӑш чухне хушаматне кӑтартсан та... тунма пуҫлаҭ: „епӗ мар, ман хушаматлӑ йулташ вӑл" тет. Питӗ чейе, питӗ кутӑн ҫын вӑл бӳрократ, вӗсемпе калаҫса... Ҫапах та пуҫланӑ историйе каласа парсассӑн, вӗсем мӗнле ҫын иккенне хӑвӑрах сисӗр.

Пуйӑсӑн хурҫӑ ӑйӑрӗ Канаш станци патнеле ҫывӑхарма пуҫласан ахӑрса кӗҫӗнсе йачӗ те, пӑсажирсем чӑмаданӗсене, кутамкисене илсе алӑк патнеле утрӗҫ.

— Каҫхи автобус Шупашкара 9 сехетре каймала, ӗлкересчӗ мӗнле те пулсан, тет пуринчен малта тӑракан хитре хӗрарӑм.

Кӑна илтсессӗн пурте ҫӑмӑллӑн сывласа йачӗҫ. Ӗлкӗрме пулаҭ, халӗ 8 сехет ҫурӑ ҫеҫ. Пулма пулаҭ те анчах васкамала, билет илме черетре тӑмала, хырӑмӗ выҫнисен „инҫе ҫула тухиччен урлӑ та пирлӗ хыпкаламала". Пӗр сӑмахпа каласан питӗ васкамала, кашни минут тем хак тӑраҭ.

Ҫавӑнпа пулас пуйӑс чарӑннӑ чарӑнманах пирӗн хӗрарӑм тӗттӗм ӑшне чӑмрӗ, епӗр (тӑваттӑн) кайа йулнисем, унта-кунта пӑхкаларӑмӑр та, автовакзала утрӑмӑр. Васкатпӑр, конешнӑ, епӗр те автобуса ӗлкӗрес тетпӗр.

Ну-с, пыратпӑр васкаса, ура хӑш ҫӗрте йӗлтӗр пек шӑваҭ, тепӗр ҫӗрте... чӑркуҫ таран пылчӑка кӗрсе лараҭ. Пурте пӗлеҫҫӗ пулӗ, Канаш станци вӑл тӗлӗшпе чи малта пыраҭ, те преми илес тет, те спаҫибӑ каласшине кӗтет, ӑна пӗлейместпӗр вара.

Пыратпӑр, автовакзал патне Канаш урамне „ырласа", ҫӳлтен витререн тӑкнӑ пек тӑкаҭ... Йураҭ. Тӳсетпӗр. Ҫитрӗмӗр хайхи автовакзал патне.

—Фу-у! Ҫитрӗмӗр ҫапах та, терӗ кушил ҫакнӑ колхозник. Унтан сухалне пӑрса тӑкрӗ те, автовакзал ҫуртне кӗме тесе пусма ҫине хӑпарчӗ. Епӗр те пит куҫсене шӑлкаланӑ хыҫҫӑн, пусма ҫине хӑпарма пуҫларӑмӑр (хӑшӗ пӗрре йарса пуснӑ, хӑшӗ иккӗ). Ҫав вӑхӑтра кӗтесрен сасӑ илтӗнчӗ.

— Кӗме йурамасҭ.

— Ма йурамасҭ?—Харӑсах кӑшкӑрса йачӗҫ пурте. Автовакзал вӗт ку!

— Ҫук!—илтӗнчӗ кӗтесрен сасӑ. Пӑхатпӑр, кӗтесре ҫын йеверлӗ ҫын тӑраҭ. Темӗскер пӗркеннӗ хӑй ҫине чапан тесен чапан мар, плашч тесен вӑл та мар.

— Автовакзал кунта мар,—терӗ вӑл интереснӑ сасӑпа. Ҫулла тикӗт сӗрмен урапа кӑшкӑраҭ вӗтха, ҫавӑн сасси пек. Те ҫумӑр ҫунипе унӑн сасси пӑсӑлнӑ, те амӑшӗ ҫапла ҫуратнӑ, ӑна кӑна ыйтса тӑраймарӑмӑр, ҫумӑр тумламӗсем ӗнсе хыҫне кӗме пуҫларӗҫ.

— Ӑҫта куҫарнӑ автовакзала?

Хайхи ҫын манерлӗҫын ҫумӑр лекмен вырӑнарах пӗшкӗнсе ларчӗ.

— Лавкасем нумай ҫӗре,—терӗ вӑл пилӗк минут шухӑшласан.

Урӑх сӑмах шарламарӗ. Темӗн чул вӑхӑт тӑма май килмест, ҫумӑр ҫӑваҭ, катӑршнӑй! Кайма тесе чемодансене алла тытнӑччӗ ҫеҫ, пирӗн колхознике темӗскер пулчӗ ҫав вӑхӑтра. Кутӑн, кутӑн чакрӗ те, пуҫӗнчен пурттӑршӗпе ҫапнӑ пек кӗмсӗртетсе перӗсе анчӗ. Хулӗнчен тытса тӑратрӑмӑр кӑна, кушилне тыттартӑмӑр, йулташ пирӗн хускалаймасҭ, ӗнсине хыпалаҭ.

— Мӗн пулчӗ сана?—ыйтатпӑр унтан хӗрхенсе.— Мӗнрен хӑрарӑн?

Ура шуса кайрӗ, атсемӗр,—тет кушиллӗ йулташ пуҫне тепӗр хут сӑтӑркаласа.—Ҫакӑн пек ҫын епӗ Андижанта куртӑм, каснӑ лартнӑ ҫакӑ, сӑмси ҫинче те, хӑлхи ҫинче те сухал пур, чӗре сӳ-ӳ туса кайрӗ те пуҫ ҫаврӑннипе тата ура шунипе кайса ӳкрӗм,—ӑнлантарса параҭ колхозник... Ҫав вӑхӑтра хӗрарӑм сасси тӗксӗм урама йанратса йачӗ. Пырса ҫитрӗмӗр, пирӗн хӗрарӑм, пуйӑсран пиртен малтан тухса сирпӗннӗскер, ҫумӑр шывӗ тулнӑ канава кӗрсе ӳкнӗ те нийепле те тухаймасҭ, чӗмоданӗ пысӑк. Инкек ҫине инкек. Елӗк автовакзал пулнӑ ҫурт йӗри-тавра халӗ тем шутпа канав чавнӑ, унта ҫумӑр шывӗ тулнӑ. Хунар тавраш ҫук, тӗттӗм. Мӗн тума, кама кирлӗ пулнӑ вӑл канав, ӑна пӗлеймерӗмӗр, васкамала пулчӗ. Анчах питӗ хӑвӑрт утма май ҫук, пирӗн хайхи хӗрарӑм канава ӳксе урине амантнӑ, аран аран утаҭ. Чӗмоданне йапала ҫуккисем йӑтрӗҫ те, ҫапах та кирлӗ темпӑпа утаймасҭ. Номӗрсем умне ҫиткелерӗмӗр Пире хирӗҫ виҫҫӗн вӗҫтерсе пыраҫҫӗ.

— Автовакзал ӑҫтине пӗлместӗр-и?—васкаса ыйтаҭ пиртен пӗри.

— Ҫук, пӗлместпӗр.

Пӗлекен ҫын хирӗҫ пуласса кӗтсе тӑратпӑр. Ҫумӑр вӑл хӑй ӗҫнех тӑваҭ, чӗреслетсе ҫӑваҭ пирӗн ҫине. Йураҭ. Аван. Тӑратпӑр. Кунта чӑх куҫ пек ҫутӑ пур.

— Капла тăрса пулмасть,—терĕ пĕр каччă,—ăçта та пулсан кайас пулать.

— Ăçта кайас?

— Лавкасен ĕретне. Çавăнтала терĕç.

Утатпăр. Урамра пиртен пуçне пĕр çын та çук. Лавкасенчен иртсен пĕр çынна тĕл пултамăр.

— Автовакзал ăçта иккенне пĕлместĕр-и?—çанниничен йăрса тытрĕ ăна кохозник. Тарăхса çитрĕ пулмала. Ěнсине хыçма чарăнмасть.

— А-а-вă, куратăр-и çута!— сасă пачĕ вăл. — А-а-ва, инçе мар. Елĕк шоферсен шкулĕ пулнă çурт. Самăй çавăнта халĕ автовакзал.

Çути мĕнĕ курăнмасть, анчах пирĕн ушкăнран шоферсен шкулĕн çурчĕн тĕлне пĕлеççĕ мĕн. Пырса çитрĕмĕр пĕр пысăк çурт патне те, тăратпăр. Çурчĕ таçта шалта ларать. Шлепкелĕ çын çĕре аллипе хыпалакаласа çав çурт умнеле утрĕ.

— Кунта-а!—кăшкăрчĕ вăл чылай вăхăтран.

Кушил çакнă йулташ, сăхсăхас тесе аллине çĕклерĕ те, анчах вăтаннипе пулас, картус сăмсине çавăрса илчĕ, унтан хывса çумăрне силлерĕ.

Çитрĕмĕр епĕр те; ни вывески çук, ни кăтартаканни çук. Пĕр пысăк зала кĕгĕмĕр.

Залăра пĕр çич-сакăр çын лараççĕ. Иртенпе машин кĕтеççĕ, имĕш.

— Автовакзал урăх вырăна куçни çинчен ма ниçта çырса та пĕлтермен. Ерне малтан хаçат çине, йе „Капкăн" çине çырса пĕлтермеле пулнă сирĕн. Капла ĕç пулать-и?—тăскаласа кăтартать хăйĕн пылчăкланнă çурăмне кушил çакнă çын каççира.

— Епĕ урана амантрăм акă,—тарăхать хĕрарăм пичĕ çинчи ыйту паллисене тутăрпа сăтăркаласа.

Каççир çамрăк хĕр ахăлтатса кулать пиртен. Кăтрисем чĕтреççĕ унăн кулнипе. Ăва мĕскер. Вăл типĕ çĕрте, унăн ниăçта та васкамала мар, вăл автовакзал ăçта иккенне лайăх пĕлет, унта ĕçлет.

— Тупнă вĕт, тата мĕн кирлĕ сире, тата икĕ сехетрен Шупашкара машин кайать,—терĕ те пÿлĕм алăкне „шарт" хупрĕ.

Колхозник урайне ура хуçса ларнă та (пукансем çук) чĕлĕм туртать. Ун йĕри-тавра çынсем пуçтарăннă.

— Андижанта мар, тайгара куртăм çавăн пек тискер çынсем, — тет вăл чĕлĕмне пăклаттарса,— Тайгара. Пичĕ-куçĕ вĕсен ĕретлĕ курăнмасть, сăмси таран сухал пуснă, хăрушă вĕсем, дисциплинă çук вĕсен...—йанăрать унăн уçă сасси пысăк залăра.

— Чăнах та, Канашра тĕттĕм тайгари пекех — инкек курмала пулчĕ,—терĕ тепĕр пассажир.

Упăшкине хирĕç.

В. Филиппăв ÿкерчĕкĕ.



—Ма есĕ упăшкуна хирĕçле сасăлатăн? Килте килĕштерместĕри мĕн?

—Килте мар.Колхоз килкартинче килĕштерместпĕр. Епĕ унăн бриагадирĕ пулатăп.

Пӳртри çӳпçап

Урăх учреждениЙе ĕçе илес çуккине кура.

„Крокодил“ журналăн пĕлтĕрхи номĕрĕнче 69 çулхи старик Одесщчинăра нимĕн хут пĕлмесĕрех писмоносĕц пулса ĕçлени çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Пире халĕ хамăрăн Вăрмар районĕнчи Шăнкăрчă йатлă йалкор Пысăк Йĕнкассинчи писмоносĕц Романăвă Анфисă çырма пит начар пĕлни çинчен çырса пĕлтерчĕ. Хаçат-журнал çырăнтарас пулсан, квиганци хаçат çырăнакан хуçине çыртарас пулаť те, апла тусан намăс пуласран хăраť. Çавăнпа хаçат-журналсем çырăнакан пуласран пирĕн Анфисă питĕ хăраť, тет

Анфисă хăй те хăй професçинчен тĕлĕнет. Хăйĕн професçипе кăмăллăнах килĕшсе çапла калаť:

— Хут сахал пĕлекен çынна ăçта ĕнтĕ ĕçлĕ вырăна йышăнса лартĕç. Маншăн пĕр çул анчах йулнă—çыхăну аппаратĕнче ĕçлесе тăранса пурăнасси.

Ыраш улăмĕ.

„Улăм çӳппи, угă çӳппи ут вăлашки айĕнче“ тенĕ авалхи пĕр йурăра. Уйкасри (Вăрмар районĕ) „Ленин çулĕпе“ колхозра улăм çӳппи çилос шăтăкĕнче.

Вăл колхоз çилоса йачĕшĕн анчах тунă. Çĕр, чавса шăтăк тунă та, ыраш улăм чыхса тăпра витсе лартнă. Сирĕн колхозра çилос пур-и, тесен: пур, теççĕ.

Сирĕн колхозра пуç мимине ыраш улăмĕнчен тунă етемсем пур-и?—тесессĕн, нимĕн те шарламаççĕ.

Пайкас вити.

Йĕпреç районĕнчи „Пайкас“ колхоз ӳсен-пулансем шывлă вырăнта лайăхрах пулаççĕ, тенине илтнĕ те, ĕне фермин витине шурлăх хĕрне лартнă. Кăнтăрла ĕнесене хупмашкăн, витен çурçĕр йенне карта тытса панă Картине йăлтах шыв тулса ларнă, витине те шыв илнĕ, тет Пайман й.

Ун пек картана правленирисене хупса хурасчĕ виçĕ кунлăха, тен шыв илнĕ вырăнта пурăнсан хăйсем ӳсеймесен те, ĕне выљăха пăхас ĕçе ӳстермели майсене шыраса тупĕç.

Кил тулли мар.

„Йалăм-йышăм йал тулли, килĕм-вутăм кил тулли“ тенĕ пĕр йурăра.

„Йалăм-йышăм йал тулли“. Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Шăхасан районĕнчи Анат Сурăм йалсоветĕнче ларакансем те „йалăм-йышăм йал тулли“ икенне кураççĕ. Анчах вут-шанкă йенчен илсен...

Йалсовета икĕ шкул кĕрет. Пайанхи куна пĕр шкулĕнче те вут-шанкă тенĕ йапала çук.

Сивĕтсен ачасен вĕренме пăрахмала пулаť. Пăрахас марччĕ. Сивĕтсессĕн шкула ăшăтма ăшă. килтен илсе пымала тумала,—çапла и, председатĕл кукка?

Сехет тăрăх.

Лавкара тавар илнĕ чухне икĕ куçупа пăхса ил, лавкара ларма прикашчик уйăрнă чухне унăн ăшчикине таварса пăхмасăр ан ил.

Иккасси (Шупашкар районĕ) йалповĕн Çатра-Хучахматри лавкара ларакан прикашчик Николайĕв Шăмат пасарĕнче 8 тенкĕ тăракан пусма таварĕсене 10 тенкĕ те 25 пуса сутаť.

Пирĕн редакцире сехет пур. Çав сехет тăрăх Николайĕв прикашчикăн йусав çуртне кайасси минут вĕçне йулни курăнаť.

Ĕçе йуратас пирки.

Пирĕн колхозра лайăх ĕçсем нумайах тăваймăн,—терĕ тĕксĕмĕн Ваçкин колхозĕн сысна ферми пуçлăхĕ,—выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели майсем çук пирĕн.

— Хăвăн ферму çинчен ко хоз правленинче уйрăм ыйту лартса сӳтсе-йавтаратăн-и?

— Мĕн тума уйрăм ыйту лартас? Пурĕ пĕрех ел кирлĕ тенине туса парас çук. Çавăнпа та уйрăм ыйту лартса аппаланса та пăхман.

— Выљăх витине ăшăтмашкăн кирлĕ йапаласем пама ыйтрăн-и?

— Ыйтман. Ыйтсан та парас çук.

— Выљăхсене вăхăтра шăвармала турăн-и?

— Вăхăтра шăварсан та мăнтăрланас çук. Пирĕн выљăхĕ çавăн йышши те.

— Выљăхсене тасатсах тăмала тумарăн-и?

— Пирĕн выљăхсем тасатсан та каллех варала наканскерсем. Çавăнпа тасатса аппаланасси çинчен шухăшламан та... Шухăшлама та кирлĕ мар пулĕ, тетĕп.

— Так-с, апла пултăр! Мĕнле вара есĕ хăвна панă ĕçе йуратас пирки?

— Кама йуратас пирки тетĕн?

— Ĕçе йуратас пирки тетĕп, мĕнле есĕ?

— Илтеймерĕм — мĕне терĕн?

— Ĕçе, терĕм.

— Ĕçе йу ратас пир-ки и?

Заведуйущчи мана ăнланаймасăр ман çине чăр пăхса илчĕ.

— Ăнланаймастăп мĕн çинчен каланине. Пĕлейместĕп. Ун пекки ман ĕç мар пулĕ,—терĕ те, урăх нимĕн те каламасăрах, манран уйăрăлса карĕ.

Куçĕ курайман.

Халĕ ĕнтĕ епĕр пурте хут пĕлетпĕр. Апла пулсан та, хамăр хут пĕлнине кăтартма кашни ал айне пулнă хут çинчех мĕн те пулин çырса ал пусма йурамасť. Ун пеккине хулиган теме пултараççĕ.

Йванчик ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Йетӗрне районӗнчи Анат-Ачак колхоз председателӗ райӗҫтӑвкомран вакунсем йусакан савӑта 3 рабочи тупса йама ыйтса йанӑ хута алла илсен: „Для исполенние Стеклову“ тесе ал пусса хунӑ. Ҫавӑн пек резолюцийӗ хут вара сӗтел ҫинче 7 кун, 7 каҫ „3 рабочийе кӗтсе“ выртнӑ. Выртнӑ ҫемӗн хучӗ ҫине хунӑ резолюцисем нумайланса пынӑ, пӗри: „Проверено рабочих рук лишних нет. **Фролов А.**“— тесе ҫырса ал пуснӑ, тепри „Проверено рабочих рук лишний имеется в колхозе один Семенов Феодор. **Ив. Копров**“ тесе ал пуснӑ.

Ҫапла вара Йухтанӑв председателӗ савӑт строителстви валли 3 рабочи тупса парайман. Анчах ҫав вӑхӑтрах колхозниксем ӗҫ шырама кайас текеннисем сахал маррине Йухтанӑв пуҫӗ аван пӗлет, анчах куҫӗ ҫеҫ кураймасӑр йулнӑ.

Мӗнле-ши?

Пысӑк Йенкассин (Вӑрмар районӗ) „Трактӑр“ колхоз председателӗ Павлӑв Т., лашасем йаланах самӑр, хӑй пекех савӑнӑҫлӑ пулччӑр тесе, вӗсене кӳлмесӗрех усрама шухӑшланипе, 53 лаша валли 24 урапа ҫеҫ тытӑт. Мӗнле те пулсан 53 лашине пӗр вӑхӑтрах кӳлсе тухмала пулсан, 29 лашине мӗнпе кӳлме шухӑшлаҫҫӗ-ши? Вӑрмана каймала пулсан йӑвӑҫсисене лаша хӳрисенчен ҫыхса турттарма шухӑшлаҫҫӗ-ши?

Ҫӗнӗ пӳрт

(Йуптару)

Тимков Ҫирки—
Йалхуҫалӑх ертелӗн членӗ
Ҫӗнӗ пӳрт лартас пирки
Пит тӑрӑшса ӗҫленӗ.
Вӑрмантан йӑвӑҫсене
Киле кӳме
Чӗннӗ вӑл йал-йышсене,
Тунӑ пысӑк ниме.
Ҫуркунне ҫитсен,
Ҫирки тӑрӑшнине кура,
Кӳнӗ йӑвӑҫсенчен
Часах пулса ларнӑ пура.
Вара ҫав пурӑран Ҫирки ҫӗнӗ,
Таса, шурӑ пӳрт туса кӗнӗ.
Ҫак ҫӗнӗ пӳрте, тумтирсемпе пӗрле
Пӗр тараканпала
Тӑватӑ хӑнкӑла
Кӗрсе кайнӑ ҫӗрле.
Иртрӗҫ тӗпеле,
Унтала- кунтала пӑхкаласа,
Лампӑ ҫутипеле
Ҫӳреҫҫӗ пӳрте пӑхкаласа.
Акӑ пӗр хӑнкӑли,
Тачка хырӑмли,
Ытти хӑнкӑлисене
Пӳрт ҫтенисем ҫине
Малти урипе тӗллесе кӑтартса,
Каларӗ тарӑхса:
—„Тфу! Ҫурт мар ку ҫурт,
Йапӑхран та йапӑх сурт...
Ҫиркин кивӗ пӳрчӗ
Ҫӗрӗк пулнӑ пулин те,
Пурӑнма хӳтлӗх пурчӗ
Унта пирӗн пурин те.
Акӑ кунта
Ҫтенасене штукатурланӑ та,
Вӗсем пӗр шӑтӑк-ҫурӑксӑр,
Ниме йурӑхсӑр“.
Хӑйӗн сӑмаххине ҫакӑнпала
Пӗтерчӗ хӑнкӑла.
— „Тӗрӗс,—терӗҫ
Ытти хӑнкӑлисем,—
Пурте тӗрӗс
Ес каланисем.
Атӑр, кайатпӑр пурте
Ҫӗнӗ пӳрте“.
Хӑнкӑласен сӑмаххисене
Шӑппӑн итлесе тӑракан
Ватӑ таракан
Хӑпарса тӑчӗ кантӑк йанаххи ҫине.
— „Тӑвансем,—терӗ таракан,—
Ман шутпа та ҫак пӳрте лартакан
Пулнӑ айван.
Хӑй ӗсне лайӑхах тӑвайман.
Мӗншӗн ха кӑмака вырӑнне
Тунӑ вӑл урай варрине?
Ҫиркин кивӗ пӳртӗнче
Пурӑнаттӑмӑр епӗр—тӗнче!..
Кӑмака хысӗнче, тӗттӗмре,
Питех те харсӑр
Никамран хӑрамасӑр
Иртереттӗмӗр ӗмӗре.
Ир пулаччӗ те, каҫ пулаччӗ,
Пурӑнма пире улахчӗ,
Пурӑнаттӑмӑр хуллен,
Хунаттӑмӑр куллен...
Е-е-й!
Ӑҫта ес телей?..
Ку пӳртре курӑнмаст
Мана валли тӗттӗм кӗтес.
Ӑҫта ман пурӑнас,
Камран пулӑшу кӗтес?“

* * *

Йуптарури хӑнкӑласемпе таракан
Калаҫнӑ пекех, хаљ епӗр тӑвакан
Ҫӗнӗ пӳрт—социалисӑмла пурнӑҫ ҫинчен
Калаҫҫӗ тиркесе, ӳпкелешсе
Хӑнкӑла пек шӑршлӑ та ирсӗр ҫынсем
Ӗҫхалӑхӗн тӑшманӗсем, йунӗҫмӗшсем.

Ф. Ванин.

Кирлĕ ĕçсемпе Трака кайсан.

— Итлеха, Илле, есĕ учрежденисенче сахал пулнă çын мар. Есĕ служăшчисемпе калаçма та, вĕсене çавăрма та пултаратăн, учреждени мыскарисене те чухлатăн, терĕç мана колхоз пухăвĕнче 3—4 çын.

— На сана çак хута, райтоп пуçлăхне кĕрсе пар,—терĕ шкул директăрĕ, Çтепанăв йулташ.

— На сана çак банка, молотилкă ваԓԓи 2 кило çу илсе кил,—терĕ колхоз председателĕ Феодăрăв Йакăв.

— На сана 4 тенкĕ укçа, 2 кило кулач илсе кил,—терĕ колхозницă Верă аппа.

— На, Илле пичи, 2 тенкĕ укçа, мана ваԓԓи кĕнекесем илсе кил,—терĕ Коԓă пионер.

Заказ нумай. Пурнăç заказĕ. Мана заказ памасăр, район центăрне—Трака кайатăп вĕт. Çавăнпа та манса кайас мар, илсех килесчĕ тесе блок-нот çине: „райтоп, 2 кило çу, 2 кило кулач тата кĕнекесем“ тесе çыртăм та лашана Тракала йурттартăм.

— Статистик йулташ, сирĕн Райтоп пуçлăхĕ Ԓвов ăçта ĕçлет ара?

— Епĕ ăна хурал тăраканни мар вĕт.

— Пĕлместĕр и?

— Пĕлместĕп.

— Йулташ агроном, сирĕн райтоп ăçта вырнаçаԏ?

— Столовăйра апат çинине куркалатăп, а ăçта ĕçленине пĕлместĕп.

— Çекретарĕ те пĕлмест-ши?

— Пĕлес çук.

— Ăçта ара?

— Незнай.

— Ей, Шетмĕсем, кама шыратăн?—ыйтрĕ манран райтоп пуçлăхне шыраса ывăнмансккер Кивйал шкулĕн пуçлăхĕ.

— Райтоп пуçлăхне,—ответлетĕп.

— Хуԋкассине кайнă тет, ан та шыра. Çапла вара манăн пĕр заказ пурнăçа кĕреймерĕ.

Уттаратăп 2 кило çу патне. Кĕретĕп магазина.

— Сирĕн çу пур-и?—ыйтатăп прикашчикран.

— Пур!—кĕскен сăмах чĕнчĕ.

—Чылай-и?

— 1—2 тоннă пулаԏ пулмала.

— Апла пулсан, 2 литăр тултарса парăр-ха мана, молотилкă çусăр лараԏ,—хĕпĕртесех, шанчăкпах калаçрăм.

— Пама пултараймастăп.

— Пама пултараймастăп мар-ха, молотилкă ĕçсĕр лараԏ, тархасшăн литăр та пулсан парса йар,—тархаслатăп.

— Тархасшăн, тархасшăн, сан „тархасшăнупа“ ĕç тухмасԏ кунта, айта тух, лапкана питĕретĕп...

— Ара есĕ чăнах та памастăн-и, çуне хĕле кĕрсен çуна тупанĕ çине сĕрсе çӳреме сутас тетĕн-и мĕн?—тавлашатăп прикашчикпе.

— Ан кĕлмĕçленсе тăр, тух тенĕ лавкаран, мĕн есĕ манран вăрçсах тавар илсе кайас тетĕн-и мĕн?..

— Ара есĕ чăнахах памастăн и, çуне хĕле кĕрсен сутас тетĕн-и мĕн, илтместĕн-и мĕн молотилкă ахалех лараԏ, çу çукран лараԏ, çу çукран.

— Мана мĕн ĕç санăн молотилкупа, епĕ Траксем, а есĕ Шегмĕ,—ответлерĕ те лапкаран тухрĕ.

Иккĕмĕш заказ пурнăçа кĕреймерĕ. Хам та ним тума антранипе, чун тавăннипе столовăйа йашка çиме утрăм. Столовăй патне çитсенех 20—30 çын ура çинче тăнине курса:

— Апат çитереççĕ-и мĕн?—ыйтатăп пĕринчен.

— Кăнтăрла иртни виç сехет çитрĕ пулин те, çитермеççĕ-ха,—терĕ пĕри.

— Мĕншĕн?—татах ыйтатăп.

— Буфетчик çук теççĕ,—терĕ тепри.

Чылайччен кĕтсе тăнă хыççăн, йашкасене илсе столовăй умне лартнă уборни умĕнчи çерем çине йашкаланма лартăмăр. Вăл вăхăтра 100 çын вырнаçмали столовăйра 7 пукан çеçчĕ. (Халĕ те 15 пуканран ытла мар.). Апатланса пĕтерсен тирĕккашăксене çерем çине хăварса 3-мĕш заказа пурнăçлама утрăм. Анчах кунта та телей пулмарĕ. Çăкăр сутакан ларйокра 2 кило çăкăр илес вырăнне, 8 кило туртакан çăра алăкран уртăнса тăнисĕр пуçне нимĕн те çук.

Тăваттăмĕш заказ.

— Цӳзмĕр автăрăн зоологи тенĕ кĕнеки пур-и? Никам та пĕр сăмах чĕнмест.

— Сутакансем çуки мĕн кунта?—тесе йунашар тăракан çынсен хăлхисем питĕрĕнсе йанраччен кăшкăрса йатăм.

— Ехе, мăйăхлах (михĕлех) сĕвĕнчĕ,—тесе хĕпĕртенипе кулкаласа вилĕ йĕке-хӳрен кĕлеткине киоскран тулала кăларса печĕ пĕри. Теприйĕ йĕкехӳре тирне аллипе çĕклесе йӳплĕ патак çине тирсе карăнтарса çакрĕ. Сутаканĕсем 2 „шĕвĕр“ чăнах та йĕрçмен, йĕке-хӳре тирне сӳсе ларнă прилавкă айĕнче.

— Цӳзмĕр пури?

— Ăна илме ГОРТ-а кай,—ответлерĕ пĕри.

— А мĕн вăл Цӳзмĕр, ачамкăсем?—ыйтрăм пĕринчен.

— Темĕскер,—куласçĕ иккĕшĕ те.

Ку заказа та пурнăçа кӳртеймерĕм. Ех, Илле, Илле, мĕн калăн-ха йала çитсен,—шутларăм епĕ. Анчах нимĕн те... Епĕ хам вывăда каламастăп. Ман вырăна, районри пĕр пĕр аслă çынна Трак тăрăх пĕр кун çеç çӳреме сĕнетĕп.

И. Сӳпенкке.

Шăшисемпе арлансем ĕрчетекенсем.

Вершинин йулташ, епĕ сирĕн умăрта халĕ айăплă çын. Нийепле те вĕг сирĕн „хисеплĕ хушăва“ пурнăçа кĕртеймерĕм. Тен пирĕн мана унщăн йатлама та, вăл специаԓнăçпа ĕçлекен ĕçрен кăларма та шутлăр. Ну мĕн тăвас тетĕр-ха, ăнман пурнăçа? Ăнмаçтĕк ăнмаçтех çав. Нийепле те вĕг шăшисем ĕрчетме майĕ çук, кашни колхозникех кушак усраԏ, çитменнине пионерсем те „сăтăр“ тăваççĕ. Тен Вершинин йулташ, ĕçе тытăначчен малтан кушаксене пĕтермеле пуԓ, тесе шухăшласа илетĕп ухмах пуçăмпа. Есĕр отношенисем çыркалама вĕренне çынсем, çырса йарсамăрччĕ çав йалсовечĕсене.

Аптăранипе пĕрех хутчен хаԓ шăши килте ĕрчетме тытăннăччĕ, анчах ăна та мур кушакĕ тыт-

са хыпнӑ. Ах, вилменскер, тесе чылайччен ылханса хуйхӑрса ҫӳрерӗм-иҫ ҫав шӑшишӗн.

Мӗн тӑвас?.. Пуҫра ҫав тери шухӑш пӑтранаҭ. Вӗт пысӑк поручени. Мӗнле пурнӑҫламасӑр хирӗҫсе тӑрӑн, райҫӗрпай пуҫлӑхӗн замеҫтитӗлӗ аслӑ агроном Григорйӗв йулташ алӑ пуснӑ.

Тарӑхса ҫитнипе хутаҫ ҫакса шаши пуҫтарма йалсем тӑрӑх тухса кайрӑм.

— Ей, кам шӑши сутаҭ, кам шӑши сутаҭ, тесе йал тӑрӑх ним намӑс-симӗсе пӗлмесӗрех „тавар вырӑссем“ пек кӑшкӑрса пыратӑп.

— Мӗскер?.. Мӗскер?.. теҫҫӗ мана хирӗҫ колхозниксем.

— Шӑши,—тетӗп.

— Мӗнле шӑши,—тесе ҫиленсех кӑшкӑра пуҫларӗҫ мана колхозниксем.

— А мӗнле шӑши пултӑр унта, шӑши ӗрчетме хушаҫҫӗ. Шупашкар райҫӗрпайӗнчи шӑшисен тата ытти йалхуҫалӑхне сийенлекенсен управђайушчийӗ Вершининсем, тесе хӑйулӑнах ответлетӗп.

— А! Есӗ шӑшисем ӗрчетме, пире выҫӑ хӑварма-и, парап сана, шуйтан ҫурине, шӑши мӑскари,— тесе ман пата колхозниксем сике-сике тухса йарса тытрӗҫ.

— А вӗлеретӗр вӗт йулташсем,—тесе аран кӑшкӑратӑп пӑвӑнса ларнипе.—Акӑ ман от-т-но-ше-ни,— тесе аран сывлӑша кӑларса каларӑм.

Колхозниксем манран уйӑрӑлса отношенине вула пуҫларӗҫ.

> Всем сельсоветам Чебоксарского района Ольдеевский. Райзо предлагает Вам организовать в колхозах Вашего сельсовета распространения мышей и хомяков, полях, лугах, токах и прочих угодиях усадьбы..
>
> Результаты представить в Райзо к I октябрю 1935 года
>
> Зам зав. Райзо — Григорьев. С.
>
> Спец. по борьбе в вред. с|х-ва — Вершинин.

Аранах вилӗмрен ҫӑлӑнтӑм-иҫ! Кун пеккине нихӑҫан та курманччӗ.

Аптранипе хам шӑши ӗрчетес ӗҫри опытсемпе паллаштарас май „Капкӑн“ редакцине кӗрса тухрӑм. Унта вӗсене йӗркерен каласа кӑтартсан:

— Вершининсем пек йалхуҫалӑх вредитӗлӗсене ӗрчетекенсемпе епӗр вирлӗн кӗрешетпӗр. Шупашкар райҫӗрпайӗнчи шӑши ӗрчетекен Вершининсем патне кушаксем тата йӗплӗ ҫӑмахсем йарса халех пӗтерӗпӗр, вара Вершинин вӗсен управђайушчийӗ те пулаймӗ,—тесе пӗлтерчӗҫ.

Ӗҫ ӑнмаҫ-тӗк ӑнмаҫтех, ҫавӑн пек пулчӗ ӗнтӗ Вершининсен хисеплӗ ӗҫӗ.

Ку отношенисем тӑрӑх йалсоветсенче чӑнах шӑшисем ӗрчетме тытӑннӑ пулсан, Вершинин мӗн калӗ-ши?

П. Шимаҥ.

В. Макарӑв ӳкерчӗкӗ

— Ӗлӗк сан аҫу ҫав ҫуртра буржуй патӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ.

— Ай-уй, пӗлмен епӗ ман атте унта пулнине. Апла пулсан ма унчухнех буржуйне пӗтермен.

Чĕлхе вĕçне çакăннă çӳп-çапсем.

„Авăнçапу вĕçленет".

Хăлхана çĕклерĕм кăна мингер çинчен, çухăрса та йачĕ пĕр йанăрав сасă:

— „Шупашкар калаçать... Чăвашсен радиосараканĕ... Хум çинче... Шăнкăртам районĕнче халĕ авăн çапу то-йĕçт, авăн çапасси вĕçленсе пырать..."

Пит те вăйлă каланă, чăвашлах çатлаттараççĕ,— вĕçленсе пырать, хӳре пек.

Ройаљ „çинче" выљать.

Унччен те пулмарĕ пĕр артиса ройаљ çинче выљама ирĕк пачĕç... Ăна малала Филиппăв йулташ, музтехникумра вĕренекенскер, двухрйадкă гармуњ çинче выљать, тесе тăнлантарчĕç.

Ройаљ çине хăпарса тăрса, йе ройаљ çинчеларса выљама май пулĕ ĕнтĕ—пысăк инструмĕнт вăл. Картла выљать-и унта, доминола и? Ун çинчен каламарĕç. Анчах кармоњ çинче выљасси çăмăл ĕçех мар пулас пек туйăнать. Хам та епĕ гармоњпе аппаланнă çын та гармоњ калама, кăштах кĕсле калама пултараттăм. Ку чăвашсен радио саракан станцине кайса пăхасах пулĕ, вĕренес ройаљ çинче, тăрса йе гармоњ çинче выртса мĕнте пулин выљама. Йатарласах кайас пулать-ха.

Вырăнтан „хăтарни" çинчен.

Çав çын çаплаччĕ те, ăна „председателтен хăтарчĕç", тесе çыратпăр тăтăшах хаçатсенче. Радио-саракан комитетри Жданкин йулташа председателтен хăтарнă", тесе хыпарларăмăр радио тăрăх та.

Председателтен кăларас çынна председателтен хăтарасси шӳтле ĕçех мар вăл—те çӳçрен çаварса илнĕ-ха ăна должнăçĕ, те хурах пусма тапăннă?—чĕлхери кун пек пуплевсене пирĕн хăвăртрах „вырăнтан хăтарас" пулать.

Китайра хаçатсем тек „çук" ĕнтĕ.

„Йулашки хут Китайри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ... суту-илђӳ, Советлă Китай çĕнтерĕвĕсем... тесе çырать „Колхозник йалавĕ" хаçат августăн 19 мĕшĕнче тухнă № -те. Вуласа пăхма васкăр-ха.

Китайра хаçатсем йулашки хут пĕлтереççĕ те, те хупăнса пĕтеççĕ ĕнтĕ, те малала урăх хыпарсем пĕлтерме шухăшламаççĕ. „Колхозник йалавĕ" хаçат чĕлхи умĕнчи йулашки хут пĕлтернĕ хăрушлăхсем—сотрудникĕсене „чăваш чĕлхине вĕренмели кружокала" сĕтĕреççĕ. **Н. Ваçанкка.**

Мăнтай çынпа хулăн çын.

Шупашкати 2-мĕш почтă уйрăмĕн çурчĕ хăй пĕчĕккипе пĕтĕм урам илемне йарать.
(Çпирт саватĕнчи рабочисен çырăвĕнчен)

В. Филиппăв ӳкернĕ.

— Кĕрсе маркă илмелеччĕ. Мĕнле кĕркелесе кайма пулĕ-ши

Суйеç Çидăр.

Ĕç пуçа кĕмерĕ Çидăра,
Çавăнпа вăл таран прорывра.
Ларчĕ Çидăр мухмăрпа супса,
Канцељари алăкне хупса.
Шырамарĕ Çидăр нимле мел—
Прорыв йатлă чир-чĕртен емел.
Пуç çĕмĕрчĕ Çидăр пит нумай.
Мухмăрсем уçмашкăн тупрĕ май.
— Пур ĕçре те йулăпин кайа,
Мĕне кирлĕ пĕтерме вăйа?
Кама йурăн тĕнчере ĕçпе?
Йурама пулать-çке чĕлхепе.
Чăнкăртатрĕ хытă телефон:
Çидăртан ыйтать отчот район.
Сасă пачĕ Çидăр будкăран,—
Цифрăсем çăваççĕ маччаран.
— Колхозра кăçал миçе тыха?
— Тыхисем хĕрĕхе йахăн та-ха...
— Лаши вăтăр иккĕ—тыхи хĕрĕх?!
Мĕн куратăн кăнтăрлах тĕлĕк.
Укçа-тенкĕн тулать-и-ха план?
— Тăхăрвунпĕр проччăн-ха пайан.
— Мĕн суйатăн, Çидăр, ес мана?
Ĕнер проччăн çитнĕччĕ вунна.
Миçе центнĕр леçрĕр тырă-пул?
— Çĕр процент патнех çывхарчĕ пуљ...
— Аçтан ха сикрĕç процĕнсем çӳле?
Çитменччĕçке çĕрккас çитмĕле.
Тыр акса пĕтерчĕç и унта?
— Пайан çеç пĕтерчĕç тупата.
— Ĕнер çеç акманччĕ çуррине,
Сассунтан туйатăп суйнине.
Кĕшнер урлă хывни-ха кĕпер?
— Пĕтерсеччĕç пулмала ĕнер.
— Хăмине çурри таран сарман,
Автобус кăштах ĕнер путман.
Вăтанмастăн, Çидăр, мĕн суйма:
Ăçта мĕн лодăр сăмахпа тума.
Суйма чарчĕ Çидăра саккун,
Çидăрсен пĕтсе килет хаљ кун.
Тек лартмарĕç Çидăра унта:
Кайма килчĕ суйеçĕн сута.

Ухантей.

Подпискă страници.

Хытă çынтан „раштавра“ та пĕр кĕреçе йур ыйтса илеймĕн.

— „Капкăн“ журнала епĕ питĕ йурататăп. Вăл килсен вара пиçмоноçĕцран тархасласа ыйтсах вуласа тухатăп.

— Апла çав тери йуратсан ма ăна çырăнса илместĕн?

— Çырăнса илместĕн тетĕн? Унăн çинчен шухăшласа пăхма вăхăт пулман, мĕншĕн тесен епĕ ĕçлĕ çын.

„Капкăн“ тăшманĕсем сўпĕлтетни тăрăх.

— Мĕншĕн есĕ „Капкăн“ илмешкĕн çырăнман?

— Çырăнсассăн та пымасť теççĕ те.

— Ху хăш уйăхшăн та пулсан çырăнса илсе пăхни кăçал?

— Çырăнса пăхман та. Çапла калаççĕ.

— Кам калаť?

— Кам каланине манса кайнă.

Сирĕн шкулти учитĕл çинчен мар-ши ку?

— Есĕ ачасене чăваш литератури çинчен вĕрентетĕп тетĕн. Ху „Сунталпа“ „Капкăн“ журналсене çырăнса илместĕн.

— Ачасене вĕрентме пирĕн чăваш литератури хрестоматисем пур. Унта мĕн çырнине вĕрентсен çитет. Ваттисем каланă: нумай та пĕтет, сахал та çитет, тенĕ.

Района каймала.

Шупашкарти чылай месткомсемпе группкомсем хăйсен хĕрлĕ кĕтесĕсем валдди „Капкăн“-па „Сунтал“ çырăнса илмесĕрех пурăнаççĕ.

— Йулташ, кала-ха: Шупашкарта „Капкăн“ журналăн çенťабĕрти номĕрне ăçта тупса вулама пулаť. „Капкăн“ редакцине кайса вулама—вăтанатăп, ку çын „Капкăн“ çырăнса илме уйăхне 25-шер пус укçине те хĕрхенет, тесе шухăшлĕç. Хам „Капкăн“ вуламасăр нихçан та пурăнакан марччĕ. Подпискă срукĕ август уйăхĕнче тухнă та, çенťабĕршĕн çырăнмасăрах йулнă.

— Шупашкарти Тĕп библиотекăна кайса пăх. Анчах хăш чухне вулакансем „Капкăн“ номĕрĕсене çаклатса кайаççĕ. Çавăнпа унта та кирлĕ номĕр тупаймасан, хăш месткомпа группкомăн хĕрлĕ кĕтессине кайса „Капкăн“ тупса вулама пулассине пĕлместĕп. Пĕр-пĕр района кайса пăхатăн пулĕ анчах.

Пулас писатĕлпе литературă журналĕсем.

— Есĕ писатĕл пулас тетĕн, ху „Сунтал“ журналпа „Капкăн“ журнала çырăнса илместĕн. Писатĕл пулма вăл журнал çинче çапăннă произведенисене тĕплĕн вуласа, мĕнле çырнисене сăнаса пымала. Чăваш литературине нимĕн те пĕлмесен ăçтан санран чăваш писатĕлĕ пулĕ.

— Ма пулмасť? Ман произведенисене вăл журналсенче пичетлесе кăларсан епĕ те писатĕл пулса тăратăп. Анчах темшĕн çапмаççĕ-ха вĕсем.

Шикли шикленет.

— Еп хам ачана, шкул кĕнекисемсĕр пуçне ыттисене те вулама вĕрентĕр тесе, „Капкăн“-па „Хатĕр пул“ çырăнса патăм-ха.

— „Капкăнне“ епĕ те илсе парас тенĕччĕ те, анчах унта çитес уйăхра хам çинчен заметкă çапăнса тухасса кĕтетĕп. Çитес ернере кĕрўсем патне ĕçке каймала. Унта колхоз лашине кўлсе кайатăп. Пăртак ĕçкелесен лашапа урам тăрăх каллĕ-маллĕ, лаши уraран ўкичченех, чупса çўреме йурататăп. Çавăншăн „Капкăна“ çакланасран хăраса çĕнĕ çулсăр „Капкăн“ илмешкĕн çырăнас мар, герĕм-ха.

Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ. За ответ. редактора Ф. АЛЕКСАНДРОВ.

Сдано в производство 20/X—35 г. Подписано к печати 5/XI—35 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 734. Заказ № 1863

Формат бумаги 1/8. Об'ем 1,25 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 2.100 Из.-газ. «Канаш»

Уйрăм № хакĕ 25 пус

Капиталист

— Хĕпĕртетĕп епĕ, савăнатăп
Етем йунĕ хытă йухнăран.
Сава, вăрçă, епĕ йурататăп
Маншăн ылттăн нумай пухнăран.